# Кĕнеке

Кĕнеке эп… Эс мана,
Тусăм, чыслă тыткала.
Пурнăçра эп яланах
Çывăх пулăп санпала.

Ан хурат чипер сăна
Сăрласа, турткаласа.
Ан чĕрсем страницăна,
Ан пĕтер таткаласа.

Питĕ йывăр аманса
Сăн-сăпат вараланса,
Эп выртап хураланса:
тусăм, мĕншĕн ашкăнан?

Эс мана упрасан
Эпĕ саншăн тăрăшам.
Йăлт вĕрентем, йăлт калам:
Вулас тесен – вулама,
шутлас тесен – шутлама,
юрлас тесен – юрлама,
ташлас тесен – ташлама.

*Вирьял,Ю. Кĕнеке : [сăвă] / Ю. Вирьял // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 274.*